Спорт хыпарĕсем

# Йĕлтĕр йĕрĕ пурне те йыхравлать

Кăçалхи хĕл сивĕ кăтартмасăр, юр пĕрчисемсĕр иртсе каять пуль тенĕччĕ. Апла пулмарĕ иккен, хĕл хăйĕн прависене самаях кăтартрĕ. Февралĕн 24-мĕшĕнче уйрăмах илемлĕ хĕвеллĕ кун пулчĕ. Шăпах çак кун А.Г. Николаев ячĕллĕ Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта Чăваш Республикин чемпионне Юрий Иванович

Федотова асăнса йĕлтĕрпе чупассипе йĕлтĕрçĕсен V-мĕш эстафети иртрĕ. Муркаш районĕ спорт енĕпе пысăк ята тивĕçнĕ, çӳллĕ шайри пусăма çитнĕ пултаруллă çынсемпе пуян. Апла пулсан вĕсен ĕçĕсене, ячĕсене асра тытмалла. Çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсем тума тăрăшмалла. Çак тĕллевпе йыхравларĕ Калайкасси тăрăхĕ районти тата республикăри спорт тусĕсене.

Талантлă та нумай енлĕ аталаннă çын пирки кĕскен палăртса хăварам. Вăл 15 çулта шкул ачисем хушшинче ГТО хĕллехи нумай енлĕ кĕрешĕвĕн Чăваш Республикин чемпионĕ пулса тăнă. Пултаруллă çамрăк йĕлтĕрпе чупса, çăмăл атлетикăра, самбо кĕрешĕвĕнче малти вырăнсене сахал мар йышăннă. Шкула ăнăçлă вĕçленĕ хыççăн И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче вĕренет. Анчах та анлă тавракурăмлă çамрăкăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлать.

Ăна халаллана республикăри йĕлтĕрçĕсен пĕрремĕш ăмăртăвĕ 2003 çулта пулса иртнĕ. Çавăнтанпа ăна кашни çулах ирттереççĕ. Паянхи пысăк шайри спорт ăмăртăвне район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Чăваш Республикин Физкультурăпа спорт министрĕ А.А. Николаев, ЧР вĕрентӳ, çамрăксен политикин министрĕн çумĕ М.Ю. Толстов, "Интурист-Чебоксары" генеральнăй директорĕ В.И. Федотов, Çĕнĕ Шупашкарти çăкăр завочĕн ертӳçи А.И. Федотов, И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ вос-питани енĕпе ĕçлекен проректорĕ О.Н. Викторов, Лебедев ячĕллĕ лицей ертӳçи С.П. Григорьев, "Хыпар" хаçатăн тĕп редактор çумĕ Г.А. Максимов, Раççей Геройĕ Е.Г. Борисов тата ытти чылай яваплă ĕçченсем килсе çитрĕç. Ăмăртăва пурĕ 18 район, хуласенчи спортсменсем хутшăнчĕç. Аякри хăнасене уйрăммăн асăнас килет. Çĕмĕрле, Канаш, Çĕрпӳ, Çĕнтĕрвăрри, Вăрнар, Улатăр районĕсен, Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хулисен йĕлтĕрçисене хапăл туса кĕтсе илчĕ сумлă ентешĕмĕрĕн тăван Калайкасси тăрăхĕ. Шел, Муркаш районĕнчи пур шкул та çак ăмăртăва хутшăнма кăмăл тумарĕ. Пĕтĕмĕшле вара 162 йĕлтĕрçĕ йĕлтĕр йĕрĕ çине тăчĕ, вăл шутра 100 арçын, 62 хĕрарăм.

Ăмăртăва шкулсен тата учительсен командисем çак йĕркепе хутшăнчĕç. 1-мĕш ушкăнра 1991-1992 çулсенче çуралнă вĕренекенсем (8-9 классем) пулчĕç. 2 хĕр ачапа 2 арçын ача тупăшрĕç. Хĕр ачасем 2 çухрăм, арçын ачасем 3 çухрăм чупрĕç.

2-мĕш ушкăнра – шкулсенчи 1989-1990 çулсенче çуралнă вĕренекенсем (10-11 классем), хĕрсем 2 çухрăм, яшсем 3 çухрăм дистанцире тупăшрĕç.

3-мĕш ушкăнра учительсен командисем вăй виçрĕç. 1-мĕш тапхăр: 35 çулчченхи хĕрарăмсем – 2 çухрăм чупрĕç, 2-мĕш тапхăр: 40 çулхи тата аслăрах арçынсем – 3 çухрăм, 3-мĕш тапхăр: 35 çулхи тата аслăрах хĕрарăмсем – 2 çухрăм, 4-мĕш тапхăр: 40 çула çитичченхи арçынсем – 5 çухрăм.

Малтан мала йыхравлакан йĕлтĕр эстафети пуриншĕн те пысăк уяв пулса тăчĕ. Ăмăртура кубоксемпе медальсемшĕн кашни йĕлтĕрçĕ хĕрӳлĕхпе палăрчĕ.

Ăмăртура пĕрремĕш ушкăнра чи пултаруллисем Калайкассисем пулчĕç. Иккĕмĕшпе

виççĕмĕш вырăнсене Ярапайкасси тата Калайкассин тепĕр команди пайларĕç. Чи аякран килсе çитнĕ Улатăр спортсменĕсене те ырăпа асăнмалла.

Иккĕмĕш ушкăнра пĕрремĕш вырăна каллех Калайкассисем тивĕçрĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче Ярапайкасси тата Калайкассин тепĕр командисем палăрчĕç.

Виççĕмĕш ушкăн çĕнтерӳçисем Калайкасси шкулĕн вĕренекенĕсем пулчĕç. Иккĕмĕш вырăна Канаш хулин йĕлтĕрçисем тухрĕç. Виççĕмĕшсем – Канаш районĕсем. Иртнĕ çулхи ЧПУ çĕнтерӳçисем кăçал тăваттăмĕш вырăн йышăнчĕç.

Çĕнтерӳçĕсемпе призерсене кашни ушкăнтах кăтартнă чи лайăх кăтартусемпе хакларĕç. Çапах та кил хуçисем, Калайкассисем, чи маттуррисем пулчĕç. Çĕнтерӳçĕсем пулчĕç, пĕчĕк кубоксене, медальсене, хаклă парнесене, пĕрер хутаç шурă çăнăх, Хисеп грамотисене тивĕçрĕç. Çакăнтан пĕрре те тĕлĕнмелле мар. Мĕншĕн тесен Шупашкарта пулса иртнĕ "Йĕлтĕр йĕрĕ – 2007" ăмăртура Калайкассисем чи маттуррисем пулса пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕç. Çавăн пекех 1-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ Калайкасси шкулне Муркаш районĕн Шупашкар хулинчи ентешлĕхĕн канашĕн пысăк кубокне, хаклă парне парса саламларĕç. Малашне те ăнăçусем сунчĕç. Сăмах май, вĕсем çак эстафетăн йăлана кĕнĕ çĕнтерӳçисем. Ăмăрту ирттересси пысăк укçатенкĕпе çыхăннă. Çĕнтерӳçĕсене парнесемпе хавахалантарма çаксем пулăшрĕç: "Чувашия" фонд, "Интурист-Чебоксары" ЗАО, "Çĕнĕ Шупашкарти çăкăр завочĕ" ОАО, ООО «Чебоксарский мельник» Çĕнĕ Шупашкарти "Россиянка" макарон фабрики, "Тав" компани, "Чувашгосснаб" концерн, "Старко" ООО, Муркашри чăх-чĕп фабрики, "Ибресинская" ЗАО АФ, "1312 Автоколонна" ОАО, "Агронефтепродукт" СХК, "Ойл Инвест" ООО, "Волга" ООО, А.В. Акимов, В.С. Рубцов, Э.И. Баранов, В.Г. Тяпкин предпринимательсем. Федотовсен çемйисен ячĕпе вĕсене пурне те тав сăмахĕ калас килет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: спорт кунĕ – пĕрлехи уяв; çĕнтерӳçĕсене – парнесем.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

***Ирĕклĕ майпа кĕрешесси.*** Февралĕн 16-мĕшĕнче района ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешессипе мала тухассишĕн ăмăртусем иртнĕ. Унта Муркаш, Йӳçкасси, Москакасси шкулĕсен тата Хĕрлĕ Чутай районĕнчен килнĕ командăсем хутшăннă. Командăсем хушшинче 1-мĕш вырăна Муркаш шкулĕ, 2-мĕшне Йӳçкасси тата 3-мĕшне Москакасси шкулĕсен командисем тивĕçнĕ.

**А. ФЕДОРОВ,**
**ăмăртăвăн тĕп судйи.**

***Пăшалтан тĕл пересси.*** Февралĕн 17-мĕшĕнче Муркаш шкулĕн тирĕнче пĕчĕк калибрлă винтовкăран тĕл пересси предприятисемпе организацисем тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем хушшинче мала тухассишĕн ĕç çыннисен 2007 çулхи спартакиади шучĕпе ăмăртусем иртнĕ. 8 команда хутшăннă унта. Уйрăм участниксенчен хĕрарăмсем хушшинче малти вырăнсене Муркаш райповĕнчи И.В. Гаврилова, Çатракасси шкулĕнчи М.М. Смирнова, Муркаш шкулĕнчи Н.Б. Романова, арçынсем хушшинче Москакасси шкулĕнчи С.Р. Кириллов, çав шкулти Ю.Ю. Иванов тата Муркаш шкулĕнчи В.Г. Львов йышăннă.

Командăсем хушшинче пĕрремĕшсем Москакасси шкулĕ, иккĕмĕшсем Муркашсем тата виççĕмĕшсем Çатракассисем пулнă.

Ăмăрту çĕнтерӳçисемпе призерсем дипломсемпе парнесене тивĕçнĕ.

***Йĕлтĕрпе чупасси.*** Февралĕн 17-18-мĕшĕсенче Шупашкар хулинче йĕлтĕрпе чупса республикăра мала тухассишĕн хуласемпе районсен командисем хушшинче ăмăртусем иртнĕ. Пирĕн районти йĕлтĕрçĕсем те хутшăннă ăмăртусене. Командăсен пĕтĕмĕшле кăтартăвĕсемпе пирĕн район команди 3-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. Уйрăм йĕлтĕрçĕсенчен вара Çатракасси шкулĕнчи Павел Охотников ялăх мар ăмăртнă.

Февралĕн 17-мĕшĕнче район администрацийĕн команди Канаш районĕнчи Шăхасанта пулнă. Кунта Чăваш Республикин патшалăх влаç тата вырăнти самоуправлени органĕсенче ĕçлекенсен 6-мĕш спартакиади шучĕпе йĕлтĕрпе чупассипе ăмăртусем иртнĕ.

Çемье командисем хушшинче район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн тĕп инженерĕ пулса ĕçлекен Г.А. Павлов çемйи (Павел тата Сергей ывăлĕсем Муркаш шкулĕнче вĕренеççĕ) ялăх пар ăмăртнă, 15 команда хушшинче 6-мĕш пулнă.

Районăн пĕрлештернĕ команди вара 30 команда хушшинче 3х2 километрлă эстафетăра 12-мĕш вырăн йышăннă.

***Хĕллехи полиатлон.*** Февралĕн 24-25-мĕшĕсенче Шупашкар хулинче республикăра мала тухассишĕн ăмăртусем иртнĕ. Муркаш районĕн пĕрлештернĕ командин шутĕнче 8 спортсмен вăй виçнĕ. Ачасемпе çамрăксен В. Егорова ячĕпе хисепленекен спорт шкулĕн тренерĕ Иван Воробьев 2-мĕш вырăна, 12 команда хушшинче район команди 6-мĕш вырăна тивĕçнĕ.

***Волейбол.*** Февралĕн 24-25-мĕшĕсенче волейболла выляссипе ялла районсенчи арçынсен командисем хушшинче мала тухассишĕн ăмăртусем пулса иртнĕ. Унта Шупашкар, Хĕрлĕ Чутай, Муркаш тата Етĕрне районĕсен командисем хутшăннă. Ăмăрту хуçи Шупашкар районĕ пулнă, ăмăртусем ирттерме спорт залĕпе тивĕçтернĕ. Çивĕч кĕрешӳре пирĕн район команди мала тухнă, халĕ Муркашсен апрелĕн 14-15-мĕшĕсенче Вăрнарта финал ăмăртăвĕсене хутшăнмалла пулать.

***Ушу-саньда.*** Февралĕн 24-25-мĕшĕсенче Шупашкар хулинче ушу-саньда енĕпе республикăра мала тухассишĕн ăмăртусем иртнĕ. Район чысне 10 спортсмен хӳтĕленĕ. Хăйсен виçе категорийĕсенче Костя Петров 1-мĕш, Павел Сапожников 2-мĕш, Даниил Храмов 3-мĕш (3-ĕшĕ те Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчен) вырăнсем çĕнсе илнĕ. Костя Петровпа Павел Сапожников вара ЧР пĕрлештернĕ командин шутне кĕреççĕ.

***Волейбол.*** Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунне халалласа февралĕн 23-мĕшĕнче Муркашри Спорт çуртĕнче волейболла выляссипе «Росгосстрахăн» Муркаш районĕнчи уйрăмĕн куçса çӳрекен кубокне çĕнсе илессишĕн районти ăмăрту иртнĕ. Унта 10 команда хутшăннă. «Моргаушрайбыт» команди 1-мĕш, «Мичурина-Профи» 2-мĕш, «Росгосстрахăн» районти уйрăмĕ 3-мĕш вырăнсене пайланă. Чи лайăх выляканнисем шутĕнче Дмитрий Гаврилов («Моргаушрайбыт»), Евгений Волков («Росгосстрахăн» районти уйрăмĕ), Иван Иванов («Мичурина-Профи»). Призерсем шутне лекнĕ участниксене медальсем панă, чи лайăх выляканнисене пĕр çулталăклăх инкек-синкекрен страхланă. Çĕнтерӳçĕ-команда вара куçса çӳрекен кубок хуçи пулса тăнă.

**Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ.**

# Усал ĕçе иртĕхме парар мар

Районти шалти ĕçсен пайĕн кăçалхи январь уйăхĕнчи ĕçне тишкернĕ май, хăш-пĕр кăтартусем пĕр пусăм çӳлелле хăпарни сисĕнет. Çакна чи малтан профилактика ĕçĕсене вăйлатнипе çыхăнтарас килет. Хваттерсене çаратассине 50 процент чухлĕ чакарма пултартăмăр. Сывлăха вăтам йывăрăш сиен кӳрекен преступленисем, хулиганла ĕçсем, обществăлла вырăнта, вăл шутра урамра тунă тĕслĕхсем, телее, тĕл пулмарĕç-ха. Экономика тĕлĕшпе тунă преступленисене 33,3 процент чакарма май килчĕ.

Уйрăмах йывăр преступленисене уçасси 100 процент пулчĕ. Йывăр преступленисене уçас шай иртнĕ çулхи хак тапхăртинчен 2,8 процент пысăкрах пулчĕ е 84,6 процент. Вăтам йывăрăшлисене уçасси 68,8 е 24,4 процент ытларах. Пысăк мар йывăрăшлине 94,7 процент уçнă е 0,3 ытларах çав тапхăртинчен.

Преступленисене пĕтĕмĕшле уçасси иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 12,4 процент чухлĕ ӳсрĕ е 86,4. Çакă республикăри вăтам кăтартуран 27 процент чухлĕ пысăкрах. 2006 çулхи çак тапхăрта 37 преступлени уçнă пулсан, халĕ вара 70-шне уçма май тупрăмăр.

Следовательсен аллинче 38(23) уголовнăй ĕç пулнă. Вĕсенчен 23(15)-шне вĕçленĕ. Вĕсене пурне те айăплав пĕтĕмлетĕвĕпе суда янă. Дознавательсем хăйсен аллине 16(6) уголовнăй ĕç илнĕ. Айăплав акчĕсене 16(9) прокурор патне янă.

Криминаллă милицин тĕп тĕллевĕ вăл – тунă преступленисене уçасси. Çулталăкăн 1 уйăхĕнче криминаллă милици çыннăн пурнăçне, сывлăхне, прависене сыхлас тĕлĕшпе тĕрлĕ комплекслă мероприятисем туса ирттерчĕ. Çак енĕпе 18(14) преступлени тунă. Криминаллă милици енĕпе тунă преступленисене 82,8 процент уçнă. Çак уйрăм хăйĕн вăйне преступленисене уçасси, шута илменнисене тупса палăртасси, саккуна пăсса наркотиксемпе, хĕç-пăшалпа суту-илӳ тăвакансене тытса чарасси, шырав тата тĕпчев органĕсенчен тарса çӳрекенсене тытасси, çавăн пекех хыпарсăр çухалнă çынсене тупасси çине уйăрать. Телее, иртнĕ уйăхра ун йышшисем тĕл пулмарĕç-ха.

Вăрланă преступленисене 71,4 (59,4) процент уçнă. Республикăри вăтам кăтарту 26,1 процентпа танлашать. 8 преступник шыравра пулнă, вĕсенчен 2-шне тупса палăртнă. Шыравра хыпарсăр çухалнисем 2 пулнă, 1 тупнă. Паллă мар 2 çын виллине регистрацилене, анчах та кам пулнине палăртайман-ха. Тăван-хурăнташĕсемпе çыхăну çухатнă 10 çын шутланнă, пĕрне тупнă.

Саккуна пăсса эрех сутасси паянхи кунăн çивĕч ыйтăвĕ пулса тăрать. Ку тĕлĕшпе эпир прокуратура ĕçченĕсемпе рейдсем ирттеретпĕр.

Уйрăмах çул çитмен çамрăксем çине пысăк тимлĕх уйăратпăр. Пĕтĕмпе вара 35(23) тĕрĕслев ирттернĕ. Рейд вăхăтĕнче 0,5 литр этил спирчĕ, спирт пур шĕвеке 1,0 литр сăмакун туртса илнĕ. Çавăн пекех сутуçăсене алăран тытас тĕлĕшпе ятраласа шĕвексене туяннă. Çапла вара 5 çынна ку ĕçпе тупăш тăвакансене тытнă, административлă майпа явап тыттарнă.

Уйрăмах çул çитмен çамрăксем преступлени тăвассине, çавăн пекех вĕсене усал ĕçе явăçтарассине чарас тĕлĕшпе чылай ĕç тума тăрăшатпăр. Пĕтĕмпе вара учетра 56 çамрăк тăрать, январь уйăхĕнче 8-шне çĕнĕрен учета илме тивнĕ. Çул çитмен çамрăксем тĕлĕшпе 27 протокол çырнă.

**В. ГРИГОРЬЕВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн çумĕ.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продаем цемент М-400, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид 15 метровый. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».**
**Тел.: 8-903-346-40-58. 1-5.**

**Продаем солому тюкованную с доставкой. Цена договрная.**
**Тел.: 8-906-134-16-47, в любое время. 2-3.**

**Продаю лесопиломатериал. Марий Эл. Документы, чеки предоставляем.**
**Тел.: 8-905-379-01-02. 2-10.**

**Сĕт-çу заводне хирĕç вырнаçнă йышăну пунктĕнче ĕне выльăх, вăкăр тирĕсене пĕр килограмшăн 32 тенкĕпе йышăнаççĕ. Тата хур е кăвакал тĕкĕсене туянатпăр.**
**Тел.: 8-903-063-07-57. 2-3.**

**Новинка!!!**
**Мини-ушной слуховой аппарат 2700 руб.**
**Маленький, сверхчувствительный удобно располагается в ушной раковине, практически не заметен для окружающих.**
**Отличный выбор и незаменимое приобретение!!!**
**А так же полюбившиеся и проверенные покупателями:**
**Заушный-беспроводной - 2200 руб. Карманный- 1500 руб.**
**Приобретайте для себя и подскажите знакомым и близким людям!**
**Отличный выбор помогающий полноценно жить!!!**
**Подбор индивидуально для каждого!**
**Приобрести которые Вы сможете 3 марта с 10 до 12 часов по адресу: Моргаушский РДК.**
**При предъявлении удостоверения (пенсионерам, инвалидам, ветеранам) скидка 10 процентов.**

**Аттестат о среднем образовании серии А, № 6224671, выданный в 2000 году Юнгинской средней общеобразовательной школой на имя Егоровой Ольги Геннадьевны, считать недействительным.**

**ОАО «Моргаушскагропромхимия» на постоянную работу требуется инспектор по кадрам, секретарь не старше 40 лет. Знание делопроизводства, ПК, оргтехники. Образование средне-специальное. Опыт работы от года. Оплата - 4000 (четыре тысячи) рублей.**

**МТЗ-80 трактор кабинине тата трактор хыçне кăкармалли утă тавăрмалли кĕрепле туянатăп.**
**Тел.: 8-927-845-19-53.**

**Продаю автомашину ВАЗ-21213 («Нива»), 1999 года выпуска. Цена договорная.**
**Тел.: 8-903-346-05-86.**

**2 марта в РДК Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи.**


**Хаçатăн çитес номерĕ мартăн 2-мĕшĕнче тухать.**


**ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӰ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
**Директор-главный редактор**
**А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3530.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 27.02.2007 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.